26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
12
ШАМАТКУН
30(6525) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, тăшмана çавăрса илмелли маневр туса тата фронтран атакăласа, паян, февралĕн 11-мĕшĕнче, ШЕПЕТОВКА хулине — пысăк чугун çул узелне тата нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне тытса илнĕ.

ШЕПЕТОВКА хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ЧЕРНЯХОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, АФОНИН генерал-майорăн, ЧУВАКОВ генерал-майорăн, ГОЛОСОВ генерал-майорăн, МИЩЕНКО генерал-майорăн, КОЗИК генерал-майорăн, ПЕТРЕНКО полковникăн çарĕсем, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВАН, НОВОХАТЬКО полковникăн танкисчĕсем, артиллери генерал-майорĕн ФРОЛОВАН артиллерисчĕсем, авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИН летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ШЕПЕТОВСКИ» тесе ят памалла тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 11-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕрçирĕм тăватă тупăпа гуннкĕ хут пĕр харăс персе, ШЕПЕТОВКА хулине тытса илнĕ хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ШЕПЕТОВКА хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1944 çулхи февралĕн 11-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ĕçсынни депутачĕсен республикăра малта пыракан ялсоветне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне парасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ республикăра малта пыракан ялсоветне памалли куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Елчĕк районĕнчи Сăръел ялсоветне парас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн
Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн
Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Электричество промышленноçĕнче ĕçлекен работниксене орденсемпе медальсем парса наградăлани

Фронт заказĕсене ăнăçлăн пурнăçланăшăн, çар электротехникин çĕнĕ тĕслĕхĕсене туса кăларас ĕçе вĕрексе çитсе, вĕсене серипе туса кăларнăшăн тата правительствăн специальнăй заданийĕсене пурнăçланăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх çаксене наградăланă:

Ленин орденĕпе — 197-мĕш номер заводăн директорне П. А. Беляева, 694-мĕш номер заводăн цех механикне И. П. Воеводина, Электричество промышленноçĕн Халăх Комиссарĕн заместительне И. Г. Зубовича, ВКП(б)-н Мускав хулинчи Сталински райкомĕн секретарьне А. Н. Исаченкăна, Электричество промышленноçĕн Халăх Комиссарне И. Г. Кабанова, 590-мĕш номер заводăн директорĕ пулнă И. И. Мамлина, 658-мĕш номер заводăн слесарь-инструментальщикне И. Т. Савицкие, 617-мĕш номер заводăн автоматсен настройщикне М. Ф. Чигака тата ыттисене те, — мĕн пурĕ 17 çынна наградăланă;

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — Яков Семенович Бенскис, Евгений Васильевич Дмитриенкăна—слесарь-инструментальщике, Андрей Петрович Левченкăна—модельщике, Антон Матвеевич Матвеева тата ыттисене те, — мĕн пурĕ 64 çынна;

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — Сергей Григорьевич Федченкăна—цех начальникне, Герман Филиппович Эдельштейна—заводри главнăй конструктора, Алексей Иванович Якунина—заводри главнăй инженера тата ыттисене те, — мĕн пурĕ 121 çынна;

«Хисеп палли» орденĕпе — Артур Янович Берзина—заводри ОТК начальникне, Александр Андреевич Блошенкăна—завком председателĕ пулнăскерне, Марк Львович Брикера, Леонид Зиновьевич Бунина — завод директорĕн заместительне, Федор Степанович Довгале—слесаре, Анна Ивановна Зверевăна — револьверщицăна, Вениамин Иосифович Златопольскис—цех начальникне, Александр Львович Кинсбургскис—цех начальникне, Евгений Григорьевич Мищенкăна—слесарь инструментальщике, Вульф Евсеевич Недорезова — заводри главнăй технолога, Мария Михайловна Романовăна, Олег Вячеславович Троицкие—цех начальникне, Матвей Борисович Цфасмана—цех начальникне, Иван Михайлович Шульгана—производство начальникĕ пулнăскерне тата ыттисене те, — мĕн пурĕ 296 çынна;

«Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе — Степан Федорович Анискевича — слесаре, Федор Яковлевич Глущенкăна—цехри старши инженера, Зоя Михайловна Даниловăна—слесаре, Александра Ильинична Ильинана — прессовщицăна, Моисей Лейбович Интриллигатора — жестяника тата ыттисене те, — мĕн пурĕ 243 çынна;

«Ĕçре палăрнăшăн» медальпе — Александр Васильевич Буйволова—цех начальникне, Леонид Моисеевич Просяка—цех начальникне, Бронислав Адамович Скиндера — цех начальникне, Мария Сергеевна Чирковăна—слесаре, Николай Петрович Яковлева—старши мастера тата ыттисене те, — мĕн пурĕ 237 çынна наградăланă.

А. Я. Вышинский юлташа Ленин орденĕ пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ ĕнер, февралĕн 10-мĕшĕнче, А. Я. Вышинский юлташа Ленин орденĕ панă. Çав ордена А. Я. Вышинский юлташа вăл çуралнин 60 çул тултарнă май, Совет государствишĕн уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн панă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 10-мĕшĕнче ЛУГА енче пирĕн çарсем малалла наступлени туса пынă, ЗАМОСТЬЕ, ВЕТЧИНЫ, ЗАОЗЕРЬЕ, КРЕСТЬЯНСКИЙ ТРУД, ТОЛМАЧЕВО, ЖЕЛЬЦЫ, ПЛОСКОВО ятлă ялсене тата ТОЛМАЧЕВО ятлă чугун çул станцине туртса илнĕ.

НОВГОРОДРАН хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса наступлени туса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

ЗВЕНИГОРОДКА тата ШПОЛА хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, çавăрса илнĕ ункă хĕссе пырса, ЯНОВКА, НЕХВОРОЩЬ, ЗАВАДОВКА, НАБОКОВ ХУТОР, СЕРЕДИН ЯР, ЯХНОВ, МЛЕЕВ, ГРУЗЬКА ятлă ялсене тата ТАЛЯВА, ЗАВАДОВКА ятлă чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

АПОСТОЛОВАРАН хĕвеланăçиерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, темиçе ял йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата хăшпĕр пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 43 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Луга енче пирĕн çарсем малалла наступлени туса пынă. Пĕр чаçăн соединенийĕсем, çавăрса илмелли маневр туса, тăшманăн каялла чакмалли çулĕсене пӳлсе лартнă, 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Çав районрах нимĕçсенчен 10 тупă, шултăра калибрлă 20 пулемет тата япаласем турттарса пыракан 70 лав тытса илнĕ. Паян пирĕн çарсем, çапăçса малалла куçса, темиçе ял тата Толмачево ятлă паха чугун çул станцине тытса илнĕ.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса наступлени туса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çын ытла вĕлернĕ, 3 танк тата хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупă персе çĕмĕрнĕ.

Совет авиацийĕ тăшман çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата штурмланă. Пĕр кун хушшинче пирĕн летчиксем нимĕçсен виçĕ чугун çул эшелонне сирпĕнтерсе янă, 8 хир тупăпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, 60 автомашина, боеприпас складне пĕтерсе тăкнă, тăшман пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Звенигородкăпа Шпола хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Пĕр чаçăн соединенийĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, пысăк опорнăй пункт пулса тăракан Яновка ялне йышăннă. Пирĕн тепĕр соединени боецĕсем Завадовка, Набоков Хутор, Середин Яр, Яхнов тата Млеев ятлă ялсене йышăннă. Çав участокра пирĕн çарсем тăшман группировкин тĕп пайĕнчен нимĕçсен темиçе подразделенине татса илнĕ те вĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Киев облаçĕнчи ĕнер йышăннă Городище ятлă район центрĕн урамĕсенче тата хула таврашĕнче гитлеровецсен виллисене пин ытла шутласа кăларнă. Нимĕçсенчен 24 тупă, 65 пулемет, 1.000 ытла автомашина тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем тăшман хăйĕн хупăрласа илнĕ дивизийĕсем валли грузсем турттарса пыма хăтланнисене сирсе яраççĕ. Сывлăшри çапăçусенче пĕр кун хушшинче нимĕçсен виçĕ моторлă «Ю—52» йышши 10 транспорт самолетне тата нимĕçсен 4 истребительне персе ӳкернĕ.

* * *

Апостолово хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса темиçе ял йышăнса илнĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем пĕр районра, тăшман тылне кĕрсе кайса, нимĕçсен каялла чакакан чаçне атакăланă. Çав çапăçура 700 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен чылай пысăк ушкăнне тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра совет боецĕсем, малалла куçса пырса, гитлеровецсене 3 рота таран вĕлерсе пĕтернĕ, 15 тупă пĕтерсе тăкнă тата грузсем тиенĕ 95 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Волынь облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ засадăран тăшмана тапăннă. Партизансем 17 автомашина, вăл шутра нимĕçсен тăватă офицерĕ ларса пыракан çăмăл машинăна пĕтерсе тăкнă. 90 гитлеровеца вĕлернĕ е амантнă. Тепĕр отрядри партизансем нимĕçсен бронепоездне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Совет Информаци Бюровĕ январĕн 31-мĕшĕнче Венгри çарĕсем Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра Германи майлă активлă çапăçаççĕ тесе пĕлтернĕччĕ. Венгрири телеграф агентстви çак ниепле те сирсе яма çук факта йышăнманни çинчен пĕлтерчĕ, Венгрири авторитетлă ушкăнсем çине кăтартса, Венгри çарĕсем хĕвелтухăç фрончĕн малти линийĕнчи çапăçусене хутшăнмаççĕ, тесе пĕлтерчĕ.

Венгри çарĕсем фронтăн малти линийĕсенче нимĕçсем майлă пулса кĕрешнине çапăçусенче тĕрĕсленĕ. Юлашки вăхăтра венгерсен темиçе çĕр салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Çакăн хыççăн законлă ыйту тухса тăрать: çав салтаксем çапăçу хирĕнче пĕчченшерĕн мар, соединени-соединенийĕпе тăрса мĕн тунă-ха ĕнтĕ? Венгерсене тыткăна илни Венгрири телеграф агентстви суйса пĕлтернине тăрă шыв çине кăларать. Çак кунсенче кăна совет çарĕсем Венгрин 18-мĕшĕпе 19-мĕш дивизийĕсенчи тата ытти соединенисенчи нумай салтака тыткăна илнĕ. Венгрин 89-мĕш артиллери дивизионĕн 2-мĕш батарейинчен тыткăна лекнĕ Добоши Ференц çапла каланă: «89-мĕш артиллери дивизионне 19-мĕш çăмăл пехотнăй дивизин 35-мĕш пехотнăй полкĕ çумне хушса панă. Фронта эпĕ 1943 çулхи çуркунне Венгри çарĕн пысăк ушкăнĕпе пĕрле килтĕм. Пире Венгрин Дон çинче çапса салатнă 2-мĕш армине улăштарма ячĕç. Пирĕн дивизи ĕнтĕ нумайранпа çапăçусене хутшăнать. Вăл пысăк çухатусем тӳсрĕ. Нумай салтаксем çапăçас килменнине офицерсенчен — «Пире мĕншĕн кунта хуса килчĕç?» тесе ыйтатчĕç. Нумаях пулмасть салтаксен пĕр ушкăнĕ тарса пăтрĕ. Таркăнсене тытса хирти çар судне пачĕç. Вĕсене вара вĕлермелле турĕç та Венгрин 105-мĕш госпиталĕн районĕнче персе вĕлернĕ».

Венгрире пуçпулса тăракан ушкăнсем, Гитлера юрас тесе, Венгри салтакĕсене вилме хăвалаççĕ, çав вăхăтрах Венгри çарĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче çапăçмаççĕ, тесе икĕпитленсе пĕлтереççĕ. Анчах чăнлăха пытарма çук. Тыткăна лекнĕ Венгер салтакĕсем кăтартни Венгрири гитлеровецсем суйнине татах тепĕр хут тăрă шыв çине кăларать.

Шкул ĕçĕ пирки пулса иртнĕ пĕтĕм Российăри канашлу

Февралĕн 9-мĕшĕнче Мускавра РСФСР-ти облаçсемпе крайсенчи çутĕç пайĕсен шкул секторĕсен заведующийĕсен тата автономиллĕ республикăсенчи Наркомпроссен пуçламĕш тата вăтам шкул управленийĕсен начальникĕсен канашлăвĕ хупăннă.

Канашлу РСФСР Наркомпросĕн пуçламĕш тата вăтам шкулсен управленийĕн начальникĕн Парфенова юлташăн докладне итленĕ. Парфенова юлташ шкулсен ĕçне контролĕсе пырассине тата ачасен пĕлĕвне шута илес ĕçе лайăхлатасси çинчен доклад тунă. Канашлу тата Марков профессорăн «Шкулта вĕренекен ачасен правилисем» пурнăçа мĕнле кĕрсе пыни çинчен тунă докладне итленĕ.

Мускаври шкулсен директорĕсем Новикова, Марьянова, Коновалова юлташсем тата Свердловскри шкул директорĕ Маковкина юлташ хĕрачасен тата арçын ачасен шкулĕсенчи вĕренӳпе воспитани ыйтăвĕн уйрăмлăхĕсем çинчен каласа панă.

Юлашкинчен РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Потемкин юлташ сăмах тухса каланă. Вăл пурне те хут вĕрентмелли плана пурнăçласси, шкулти вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатасси, вĕренекенсен культурлăхĕпе пĕлĕвĕсене ӳстерессипе чи кирлĕ задача пулса тăнине палăртнă. Çак задачăсем пуринчен ытла халь, çичĕ çула çитнĕ 2 миллион çурă ача шкула çӳреме пуçланă вăхăтра, ирĕке кăларнă районсенче шкулсене ура çине тăратса çĕнĕ шкулсем уçнă вăхăтра питĕ пысăк задачăсем пулса тăраççĕ. (ТАСС).



Ӳкерчĕк çинче: Совет Союзĕн Геройĕ — гварди лейтенанчĕ Семен Васильевич КОНОВАЛОВ.

С. В. Коновалов юлташ—чăваш халăхĕн ывăлĕ. Вăл Тутар республикинчи Тенкки районĕнчи Ямпулат ялĕнче çуралса ӳснĕ.

(ТАСС фотохроники).

Сăръел ялсовечĕ—республикăра малта пыракан ялсовет

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн «Чăваш Коммуни» хаçатăн паянхи номерĕнче пичетленекен Указĕ тăрăх, Елчĕк районĕнчи Сăръел ялсоветне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă.

Сăръел ялсовечĕн исполкомне 1937 çултанпах парти членĕ депутат С. Г. Гарифуллин юлташ ертсе пырать. Ялсовечĕ хăйĕн мĕнпур ĕçне планпа туса пырать, ялсовет сессийĕсене, Чăваш АССР Конституцийĕн 57-мĕш статьипе килĕшӳллĕн, вăхăтра туса ирттерессĕ тата исполком ларăвĕсене те вăхăтра ирттерсе пыраççĕ.

Социализмлă ăмăртăва тĕп никĕсе хурса ĕçлесе, ялсовечĕ мĕнпур депутатсене тата актива ĕçе явăçтарнă, яланлăх комиссисен ĕçне тĕрĕс йĕркеленĕ, фронта пулăшас тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă, çавăн пекех ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртес, шкул ĕçне лайăхлатас тата халăхран укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе те чаплă çитĕнӳсем тунă.

Кунти яланлăх комиссисем—шкул енĕпе, бюджет енĕпе, суту-илӳ тата ялхуçалăх ĕçĕсем енĕпе ĕçлекен комиссисем хăйсен ĕçне ялсовет исполкомĕн планĕпе килĕшӳллĕн туса пыраççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсем мĕнле пулса пынине тĕрĕслесе тухаççĕ те тĕрĕслӳ итогĕсене исполком сессийĕсенче е ларăвĕсенче сӳтсе яваççĕ, сĕнӳсем параççĕ. Кашни сессире яланлăх комиссисем содокладсем тăваççĕ.

Ялсовечĕ 55 çынран тăракан активиза пĕтĕçтернĕ. Активистсем яланлăх комиссисен ĕçĕсене, сессисемпе ларусем ирттернĕ çĕре тата ялти ĕçсынисем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне туса пынă çĕре хутшăнаççĕ.

Ялсовет исполкомĕн ларăвĕсенче тăтăшах колхоз правленийĕн ĕçĕсем çинчен сӳтсе яваççĕ, конкретлă кăтартусем параççĕ, кайран вара çав кăтартусене мĕнле пурнăçа кĕртнине депутатсем тимлĕн тĕрĕслесе тухаççĕ.

Ялсоветри «Марс» колхоз çинчен республикăра пĕлмен çын та çук ĕнтĕ. Çак колхоза организацилленĕренпех вăтă коммунист Абдул Гаязович Гаязов ертсе пырать, вăлах парторганизаци секретарĕ пулса ĕçлет.

«Марс» колхоз 1943 çулта кашни гектартан пĕрчĕллĕ тырăсем вăтам шутпа 12,8-шер центнер, уйрăмăн илсен—ыраш 14-шар центнер, çурхи тулă 12-шер центнер, сĕлĕ 13-шер центнер туса илнĕ. Государство умĕнчи мĕнпур парăмсене срокчен парса татнă, государствăна аш-какай, сĕт-çу памалли обязательствăсене ытлашшипех тултарнă.

Колхоз иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе пурнăçланă. Çамрăк выльăхсене пĕтĕмĕшпех сыхласа хăварнă. Çапла вара выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1943 çулхи плана колхоз лашасем енĕпе—101 процент, ене-выльăхсем енĕпе — 108 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе—102 процент, чăх-чĕпсем енĕпе—112,4 процент, кроликсем ĕрчетес енĕпе — 103,3 процент тултарнă. Колхоз хурт-хăмăр ĕрчетмелли плана та 102 процент ытла пурнăçа кĕртнĕ.

Сăръел ялсоветĕнчи ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар фондне хăйсен перектленĕ тыррине хывас ĕçе пуçарчĕç. Вĕсем 1942—1943 çулсенче Хĕрлĕ Çар фондне 438 пăт тырă, 15 центнер тулă çăнăхĕ, 673 килограмм аш-какай, 72 килограмм çу, 1.765 çăмарта тата ытти те панă. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем валли ăшă япаласем—38 мăшăр çăматă, 30 кĕрĕк пиншак, 72 мăшăр çăм носки, 210 мăшăр çăм перчатка, пĕр тăлăп, 90 çĕлĕк, ăшă кĕпесемпе фуфайкăсем—60, вата хурса çĕленĕ курткăсем—12, ватăпа çĕленĕ ăшă йĕмсем—6 пухса панă, çавăн пекех ăшă япаласем хатĕрлеме 74 килограмм çăм, 111 тир пухнă.

Ялсовечĕ Хĕрлĕ Çар фондне укçа-тенкĕ хывас тĕлĕшпе те пысăк ĕç туса ирттернĕ. Тăшмантан ирĕке кăларнă районсене 14 пуç выльăх тата 40 пăт тулă парса пулăшнă.

Ялсоветра государствăна тырă сутас ĕç пысăк çĕкленӳпе пулса иртнĕ. Ялсовечĕпе пурĕ 10.000 пăт тырă сутнă, вăл шутра колхоз председателĕ А. Г. Гаязов юлташ хăй 166 пăт сутнă.

Сăръел ялсоветĕнче шкул çулне çитнĕ ачасем пурте вĕренме çӳреççĕ. Шкулта вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăх йĕркеленĕ. 1943—1944-мĕш вĕренӳ çулĕн малтанхи çурçулĕнче 1—4-мĕш классенче вĕренекенсен 94,27 процентĕ, 5—7-мĕш классенче вĕренекенсен 98 процентĕ ĕлкĕрсе пыраççĕ. Ачасем шкула çӳресси те тивĕçлĕ вырăнта.

Ялсоветĕнчи тулликмар вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем уйхир ĕçĕсене активлăн хутшăннă.

Шкул валли 163 кубометр вутă хатĕрлесе пĕтĕмĕшпех турттарнă. Вĕренекенсене вĕри апат йĕркеллĕ ситереççĕ.

Ялсоветĕнче трахоматознăй тата акушер пункчĕсем пур. Вĕсем таса çуртсенче вырнаçнă, вĕсене вутă çителĕклĕ хатĕрлесе панă.

Сăръел ялсовечĕ промышленноçпа транспорт валли ĕç вăйĕ мобилизацилемелли нарядсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырать. Ялсовечĕ ялсене илемлетес, çулсемпе кĕперсене йĕркеллĕ тытса тăрас тĕлĕшпе те сахал мар ĕçсем тунă.

Ялсовтĕнчи вулав çурчĕ (заведующийĕ З. Сабирзянов юлташ) йĕркеллĕ ĕçлет. Вăл чăннипех ялта культурăпа тата агитацилле-масăллă ĕçсен вучахĕ пулса тăрать.

Ялсовет исполкомĕпе колхоз правленийĕ малта пыракан уйхир бригадине пама куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав тунă. Çавăн пекех кăтарту хăми организациленĕ.

Ялсоветри агитколлектив хăйĕн ĕçне кăтартуллăн туса пырать.

Сăръел ялсовечĕн паха ĕçĕсенчен нумай вĕренмелли пулать.

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Звенигородкăпа Шполăран çурçĕртерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Звенигородкăпа Шпола хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ ушкăнне пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ. Хупăрласа илнĕ ушкăна хĕснĕçемĕн хĕссе пыраççĕ.

Тапăнса пыракан çарсен тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çеç мар, çутçанталăк начар тăнине те сирсе яма тивет. Çулсем çинче ишсе тухмалла мар пылчăк, çумăр вĕçĕмсĕр çуса тăрать, техникăпа маневрсем тума çав тери йывăр. Апла пулин те пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пыраççĕ.

Самолетсене вĕçме çанталăк юрăхсăр пулин те, совет летчикĕсем тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Пĕр кун хушшинче кăна штурмовиксем нимĕçсен 11 танкĕпе хай тĕллĕн çӳрекен туппине, 52 автомашинине тата нумай лав пĕтерсе тăкнă.

Артиллеристсем тапăнса пыракан пехотăпа пĕрлех пыраççĕ, вĕсем тăшмана тӳррĕн тĕллесе переççĕ. Полянский офицер командир пулса тăракан подразделенин батарейи юлашки çапăçура кăна нимĕçсен хай тĕллĕн çӳрекен 4 туппине тата 12 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

Тăшман хăйĕн опорнăй пункчĕсене уйрăмах вăйлă хӳтĕлет. Меллĕ рубежсенче ларакан икĕ ялшăн пынă çапăçу ку тĕлĕшпе уйрăмах палăрса тăрать. Пĕр чаçăн пехотинецĕсем ялăн кăнтăр-хĕвеланăç пайне тытса илнĕ, çав ялăн юханшыв леш енчи пайĕ ун чухне тăшман аллинче тăнă. Часть командирĕ пехотинецсен пĕр ушкăнне уйăрса илнĕ. Вĕсем варман витĕр тухнă та нимĕçсене сулахай енчи флангран пырса çапнă. Çав вăхăтрах çурçĕр-хĕвелтухăç енчен совет пехотинецĕсен тепĕр ушкăнĕ тухнă. Тăшман гарнизонĕ, пĕтĕмĕшпех хупăрласа илсе çĕмĕрсе тăкасран хăраса, опорнăй пунктран васкавлăн тухса кайнă, хăй аллинче юлнă пĕр-тен-пĕр çулпа тепĕр ял патнелле чакнă.

Анчах пирĕн хăвăрттăн куçса çӳрекен отряд тепĕр ялне те хĕвеланăç енчен атакăланă. Çав вăхăтра ытти подразделенисем, ял патне çурçĕр енчен пырса тухса, гитлеровецсен каялла чакмалли çулне татнă. Тăшманăн çапах та усăллă майсем пулнă-ха: ун аллинче яла çурçĕр енчен пырса кĕмелли вырăнсене персе тăмалли икĕ çуллĕ вырăн пулнă. Анчах та пирĕн пехотинецсем хăюллăн та татăклăн кĕрешнĕ. Вĕсем çĕрле, çулсăр-йĕрсĕр вырăнпа, чĕркуççи таран пылчăк ашса пырса, çавăрса илмелли маневр тунă та çутăлас вăхăт тĕлне тăшманăн опорнăй пунктне атакăланă. Гитлеровецсен пĕчĕк пайĕ кăна тарса хăтăлма пултарнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкнă.

Пĕр чаçра интереслĕ факт пулнă. Командир патне ялти колхозник Андрей Степанюк пынă. Вăл хăйĕн кĕпине хывнă та йăрăмласа пĕтернĕ çурăмне кăтартнă.

— Мĕн ку? — тесе ыйтнă унран.

— Ылханлă нимĕç! Эпĕ винтовка ыйтма килтĕм. Чĕрĕ чухне нимĕçсене вĕлеретĕпех.

Каçалапа Степанюк атакăласа пыракан пехотинецсем хушшинче пулнă. Флангран тапăнса пыракансене хӳтĕлесе тăнă пулемет сасартăк ĕçлеме чарăннă. Степанюк, хăш тĕлте чупса, хăш тĕлте хырăмпа шуса, пулемет патне пырса çитнĕ. Пулемет расчетĕнчи çынсем вилсе е аманса пĕтнĕ пулнă. Анчах, акă, пулемет татах ĕçлеме пуçланă. Андрей Степанюк гитлеровецсем çине вилĕм тăкнă.

Çапăçу лăплансан, часть командирĕ Степанюка малтанхи çапăçури çитĕнӳсемшĕн саламланă, унăн кăкри çине «Хастарлăхшăн» медаль çирĕплетсе лартнă.

Тăшмана курайманни совет воинĕсене тата вăйлăнрах малалла тапăнса пыма хавхалантарать. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен çĕнĕ те çĕнĕ ялсене ирĕке кăлараççĕ.

Чăхсем çăмарта тума тытăнчĕç

ОКТЯБРЬСКОЕ, февралĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Е. Андреева колхозница тăваттăмĕш çул ĕнтĕ «20 лет Чувашии» колхозра чăх-чĕп ферминче ĕçлет. Чăхсене мĕнле пăхмаллине вăл лайăх вĕренсе çитнĕ. Çавăнпа фермăн тухăçлăхĕ те ӳссех пырать. Иртнĕ çулта кашни чăхран 94-шар çăмарта илнĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна 183 çăмарта ĕçшĕн хушса тӳленĕ.

Фермăра пĕтĕмпе 100 чăх шутланать. 70 çулхи колхозница Андреева юлташ вĕсене юратса пăхать. Вăхăтра çитерет, ĕçтерет, лармалли вырăнĕсене таса тытать. Чăх йăвисене те вăл тахçанах тутса хатĕрленĕ. Халĕ чăхсем çăмарта тума пуçланă та ĕнтĕ.

С. РУМЯНЦЕВ.

ЯЛСОВЕТ ДЕПУТАЧĔСЕН ОТЧЕЧĔСЕМ

Суйлавçăсен наказĕсене лайăх пурнăçласа пырать

Ялсовет депутачĕсене суйланăранпа тăватă çул иртрĕ ĕнтĕ. Халĕ депутатсем суйлавçăсем умĕнче хăйсен тăватă çул хушшинчи ĕçĕсем çинчен отчет туса параççĕ. Кашни депутатăн отчечĕ хăйне майлă уйрăмлăхпа палăрса тăрать. Хăшĕсем колхоз производствинче, теприсем культура ĕçĕнче, виççĕмĕшĕсем халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ытларах ĕçленĕ. Анчах Афанасий Владимирович Владимиров депутатăн отчетĕнче ун пек уйрăмлăхсене курмастăн, вăл ялти пур ĕçсене те пысăк вырăна хурса, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн ĕçлет.

Владимиров юлташ — Калинино районĕнчи Ермошка ялсовечĕн депутачĕ. Вăл Калинин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Мĕнле пурнăçа кĕртсе пырать-ха вăл суйлавçăсен наказĕсене?

Суйлавçăсем депутатсене колхоз стройне малалла çирĕплетсе пырса, колхозниксене пуян та культурăллă пурăнакан тума хушса хăварнă. Суйлавсем хыççăн иртнĕ 4 çул хушшинче А. Владимиров депутат ертсе пыракан колхоз хуçалăх тĕлĕшĕнчен чылаях ӳссе çирĕпленчĕ.

1941 çул пуçламĕшĕнче колхоз фермисенче 46 ĕне, 107 сурăх, 33 сысна пулнă. 1944 çул пуçламĕшĕнче фермăсенче 87 ĕне, 277 сурăх, 176 сысна тата 250 пуç ытла чăх-чĕп, хур-кăвакал пур. Выльăх чĕрлĕхсен ăратлăхĕ лайăхланнă. Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана кашни çулах иртгерсе тултарса пынă. 1944 çулшăн колхоз государствăна аш-какай парса татнă, 1945 çулхи аш-какай обязательствисене те çуррине ытла пурнăçланă.

Тырпул, пахча-çимĕç, çĕрулми тата техникăллă культурăсен тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе те колхоз пысăк ăнăçусем тунă. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче колхоз çуракине 7 кун хушшинче вĕçленĕ. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, Октябрь уявĕ тĕлне государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă, планран иртгерсе 300 центнер тĕштырă аванс шучĕпе парса хунă. Государствăна кооперации урлă 3.618 пăт тырă сутнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем фронтпа тăван çĕршыва вăйлăн пулăшса тăраççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа колхозниксем боецсем валли 200 тир, 150 килограмм çăм тата ытти чылай япаласем пухса панă. Государствăн иккĕмĕш Военнăй заемне 247 пин тенкĕлĕх çырăнса илсе, укçине икĕ кун хушшинче тӳлесе татнă. Иртнĕ çулсенче, колхоз самолетсен эскадрильисемпе танксен колоннисене тума тĕмиçе вунă пин тенкĕ хывнă.

Халăх сывлăхне сыхлас енĕпе фельдшер пункчĕ уçнă, ăна валли çурт лартса панă. Колхоз çулĕçсемпе кĕперсене яланах юсавлă тытса тăрать.

Халăха вĕрентес енĕпе чылай ĕçсем тунă. Ялсоветра 7 çул вĕренмелли шкул çурчĕ туса лартнă, унта 300 ача ытла вĕренеççĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсен тата вăрçă инвалидĕсен çемьисене — 23 çемьене тырпул, 16 çемьене тумтирсем, выльăх-чĕрлĕхсем парса тата вутă кӳрсе парса пулăшнă.

Колхоз çуракине хатĕрленсе çитнĕпе пĕрех. Халĕ колхозниксем вăя шеллемесĕр ĕçлесе, фронтпа Тăван çĕршыва татах та ытларах апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар парса тăрассишĕн кĕрешеççĕ. Çак ĕçре вĕсене ялсовет депутачĕ Афанасий Владимирович Владимиров ертсе пырать.

Б. ШОРНИКОВ.

Багров депутатăн отчечĕ

СЕНТЕР. (Хамăр корр). Сĕнтĕр ялсовечĕн депутачĕ — учитель М. Багров юлташ суйлавçăсене хăйĕн вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинчен отчет туса пачĕ. Багров юлташ, учитель пулса çур ĕмĕр хушши ĕçлекенскер, ялти массăпа яланах таччăн çыхăнса тăрать.

—Сĕнтĕр ялсовечĕ,—тет вăл, — 1942—43 çулсенче хăшпĕр ĕçсемпе районра малти ретре пычĕ. Ялсовет депутачĕсем пулăшнипе партипе правительствăн пур мероприятийĕсене те ăнăçлă пурнăçланă. Укçа-тенкĕ пухас енĕпе ялсовет халĕ те районра 1-мĕш вырăнта тăрать.

Сĕнтĕр ялсовечĕ заема 258 пин тенкĕлĕх, укçапа япаласен лотерейин билечĕсене 159 пин тенкĕлĕх сарнă. Укçине те пухса пĕтернĕ. Танксемпе самолетсем тунă çĕре 33 пин тенкĕ укçа пухса панă.

Ялсоветра пособи илсе тăракан хуçалăхсем пурĕ—131. Ку таранччен вĕсене 10.875 тенкĕ пособи панă. Колхозсенче Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе фронтовиксен çемьисене 83 центнер тырă, 38 сысна çури парса пулăшнă.

Ялсоветри 6 колхозран 4-шĕ 1943-мĕш ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. «Ударник», Мичурин, Чкалов ячĕсемпе тăракан колхозсем гектартан 100-шер пăт тырă туса илнĕ. Государство умĕнчи пур парăмсене те срокчен парса татнă. Хăйсен ирĕкĕпе государствăна 955 центнер тырă сутнă.

Багров депутатăн отчечĕ тăрăх пренире 10 çын тухса каларĕç. Вĕсем депутатсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, малашнехи задачăсем çинчен чарăнса тăчĕç.

Т. ИВАНОВ.

Ялсоветĕнчи малта пыракан колхоз

Шупашкар районĕнчи «Самолет» колхоз паянхи куна çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитрĕ. Вăрлăхсене сортласа, тасатса хунă. Вĕсен шăтас пахалăхĕ те лайăх. Колхоз ут таврашĕсем çителĕклĕ хатĕрленĕ, киввисене юсанă тата çĕнĕрен те туяннă. «Самолет» колхоз ĕç лашисем валли сĕлĕ, утă çителĕклĕ таран хатĕрлесе хунă. «Самолет» колхоза иртнĕ çул çуракине пысăк пахалăхпа ирттернĕшĕн Шăнкас ялсовечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. Кăçал та куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илес тесе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Д. СЕДОВ.

Пĕтĕ кĕрсесене лайăхрах пăхар

ЙЕПРЕÇ. Районри нумай колхозсенче — «Путиловка», «Эконом», «Красный Октябрь» тата ыттисенче те—кăçалхи çул пĕтĕ кĕрсесене лайăх пăхса усраса вĕсен тихисене ӳстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. «Путиловка» колхозра 17 пĕтĕ кĕрсене уйрăм пăхса усраççĕ.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсенче пĕтĕ кĕрсесене тирпейсĕр пăхаççĕ, çавна пула уйрăм кĕсресем хăм пăрахаççĕ. «Красный Водник» колхозра пĕтĕ кĕсресенчен 33 проценчĕ хăм пăрахнă. Çак колхозри бригадирсем Романова, Хлебнов, Казакова юлташсем пĕтĕ кĕсресене йывăр ĕçе е нимене ярса хăм пăрахтараççĕ.

Çавăн пекех «Красный фронтовик» колхозра 8 кĕсре хăм пăрахнă. Бригадир Ефимов юлташ пĕтĕ кĕсресем çине çиелтен пăхать. Апла пулсан та правлени ларăвĕнче ăна ятласа çеç хăварнă. 8 кĕсрене хăм пăрахтарнăшăн тивĕçлĕ ответ тыттарман. «10 лет Октября» колхозри пĕр бригадăра 4 кĕсре хăм пăрахнă. Бригада лашасемпе тивĕçлĕн усă курмасть, хытă чуптарса çӳреççĕ тата ытти те. Çак ĕçре зоотехник Краснов та айăплă, вăл «Красный фронтовик» колхозра пĕтĕ кĕсресене акт çырса йĕркелемен. Пĕтĕ кĕсресене пăхассине халех йĕркелемелле. Хăм пăрахтарнăшăн айăплисене ответ тыттармалла.

П. КУРАКОВ.

Вăкăрсемпе ĕçлеççĕ

Шĕкĕрти «Новый путь» колхозри (Шăхасан районĕ) колхозниксем Семен Спиридоновпа М. Алексеев хăйсен килĕсенчи вăкăрсене кӳлме вĕрентрĕç. Халь вĕсем, кирек ăçта каяс пулсан та, сывăхри çулсене вăкăрсемпе кайса килеççĕ. Çуркунехи вăхăтра ака тума тата килти пахчасене сухалама лаша вăйĕсем çитмесен, вăкăрсемпе усă куратпăр, теççĕ. Вĕсенчен пример илсе ытти колхозниксем те хĕсĕр ĕнесене кӳлме вĕрентесшĕн.

Т. ГРИГОРЬЕВ.

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри чылай колхозсенче вăкăрсене кӳлме вĕрентеççĕ. Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхозра пурĕ 6 вăкăра кӳлме вĕрентрĕç. Кӳлме вĕрентнĕ вăкăрсемпе колхозра уя тислĕк тата фермăри выльăх-чĕрлĕхсем валли тĕрлĕрен апат-çимĕç турттарнă, çĕрте çителĕклĕ таранах усă кураççĕ. Вăкăрсемпе уя тислĕк турттарнă çĕрте уйрăмăнах А. Петрова, Н. Захарова, А. Логинова, А. Меркурьева колхозницăсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем уя кулленех вăкăрсемпе 10—15 лав тислĕк турттараççĕ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсене малалла çирĕплетсе пырассишĕн

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ комсомолăн шкулсенчи ĕçĕсем çинчен йышăннă решени тата вăл решенине ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен бюровĕсенче, комсомол организацийĕсенче ăнлăн сӳтсе явни комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ĕçне лайăхлатма, организацисен йышне ӳстерме пулăшрĕ. Халĕ ĕнтĕ вăтам шкулсенче 3—4 комсомолецран çеç тăракан организацисене сайра-хутра тĕл пулма пулать. Организацисем нумайĕшĕ 30—40 комсомолеца пĕрлештерсе тăраççĕ. Сăмахран, хĕрачасен Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи организацинче 81 комсомолец, Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулти организацинче 56 комсомолец тăрать.

Комсомольски районри Асанкассинчи тулли мар вăтам шкулта 1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕн пуçламĕшĕнче пĕр комсомолец та пулман. ВЛКСМ райкомĕ тăрăшнипе унта комсомол организацийĕ тунă. 1943 çулти декабрь уйăхĕнче кăна 19 çамрăк комсомола кĕнĕ. Кун хыççăн комсомолецсен йышĕ татах та ӳснĕ. Халĕ комсомолăн классенчи групписем учительсен коллективне ĕçре пулăшса пыраççĕ. Вĕсем дисциплинăна пăсакан ачасем çинчен вăхăтра сӳтсе-яваççĕ, ачасем кану вăхăтне культурăллă ирттереççĕ. Çапла вара вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕнче вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 95 процента çитиччен ӳснĕ.

Комсомол организацийĕсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренес ĕçе организацилеççĕ. Сталин юлташăн кĕнекине вĕренме организациленĕ кружоксене аслă классенче вĕренекенсем пурте çӳреççĕ. Çапла, Улатăр хулинчи шкулсенче Сталин юлташăн кĕнекине вĕренмелли кружоксене 380 ача çӳреççĕ. Унта кружоксене шкул директорĕсемпе историне вĕрентекенсем ертсе пыраççĕ. Класс руководителĕсемпе уйрăм комсомолецсем классенче кашни кунах политинформацисем ирттереççĕ. Совет Информаци Бюровĕн сводкисене кураннăмалли вырăна çырса çакаççĕ.

ВЛКСМ Улатăр горкомĕ комсомолăн шкулсенчи организацийĕсене тимлĕн пулăшса пырать. Горком секретарĕсемпе бюро членĕсем часчасах шкулсенче пулаççĕ, вĕренекенсен пухăвĕсенче политикăллă докладсем туса параççĕ. Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче комсомол организаци секретарĕсен канашлуне виçĕ хутчен ирттернĕ. ВЛКСМ горкомĕн бюровĕнче шкулсенчи комсомол тата пионер организацийĕсен ĕçĕсем çинчен отчетсем итленĕ. Халĕ шкулсенче техникăллă кружоксем организацилеççĕ.

Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта вĕренӳ çулĕн пуçламĕшĕнче 26 комсомолец анчах пулнă. Иккĕмĕш чĕрĕк вĕçленнĕ çĕре вара 56 комсомолеца çитнĕ. Комсомол организацийĕ пионерсемпе шкул ачисене тĕрĕс воспитани парас тĕлĕшпе вăй хурса ĕçлет.

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем фронта пулăшас тĕлĕшпе те паха ĕçсем тăваççĕ. Вăрмар районĕнчи шкулсем кĕске вăхăтрах Донбасс облаçĕнчи ачасене пулăшма 42.000 тенкĕ укçа пухнă. Улатăр хулинче çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе тимуровецсен 59 команди ĕçлет. Вĕсем шефа илнĕ пĕр госпитале 76 мăшăр кĕпе, 464 мăшăр чăлха юсаса панă. Госпитальри аптека валли 430 кĕленче пухнă.

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем колхозсене çĕрулми тăррисем касса хатĕрлеме, кайăк кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл пухма пулăшаççĕ.

Анчах комсомолăн шкулсенчи чылай организацийĕсем начар ĕçлеççĕ-ха. Екĕш Нăрвашри (Тăвай районĕ) вăтам шкулта 5—7-мĕш классенче вĕренекен 130 ачаран 46-шĕ, 8—10-мĕш классенче вĕренекен 98 ачаран 40-шĕ ĕлкĕрсе пыраймаççĕ. Анчах та комсомол организацийĕ вĕренӳ пахалăхне лайăхлатассишĕн пачах та тăрăшмасть. «Вĕренекенсем хăйсене хăйсем епле тытмалли правилăсене» мĕнле пурнăçласа пынине комсомол организацийĕсем çителĕксĕр тĕрĕслесе тăраççĕ. Чылай комсомолецсем çав правилăна хăйсем те çирĕплĕн пăхăнмаççĕ. Вĕсем час-часах урoксенчен юлаççĕ, урок вăхăтĕнче ыйтмасăрах тухса çӳреççĕ, киле панă задачăсене пурнăçламаççĕ. Асăннă фактсем ĕнтĕ комсомолăн хăшпĕр райкомĕсемпе горкомĕсем комсомолăн шкулсенчи организацийĕсене начар ертсе пыни çинчен калаççĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă решенине кашни комсомолецăн тĕрĕс пурнăçласа пырас пулать.

А. ТОКАРЕВ,
ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

„СССР тата Чехословакия—вăрçăра“ ятлă выставка уçăлнă

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Культурăпа экономика тĕлĕшĕнчен Совет Союзĕпе çыхăнса ĕçлекен Чехословаки обществи Лондонра «СССР тата Чехословакия — вăрçăра» ятлă выставка уçнă. Выставкăра Чехословакин çар чаçĕ Совет Союзĕнчи фронтра мĕнле кĕрешнине кăтартакан материалсем, çавăн пекех тата Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет искусстви мĕнле аталанса пынине кăтартакан экспонатсем пур.

Выставкăна уçнă чухне унта хăнасем нумай пулнă. Хăнасем хушшинче Чехословакин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Губерт Рипка, шалти ĕçсен министрĕ Славик тата Чехословакин ытти нумай министрĕсем, Совет Союзĕн Чехословаки правительстви çумĕнчи посолĕ Лебедев, Англин Чехословаки правительстви çумĕнчи посланникĕ Никольс, Чехословакин государство совечĕн членĕсем, çавăн пекех тата Чехословакин культура тĕлĕшпе ĕçлекен çыннисем пулнă.

Культурăпа экономика тĕлĕшĕнчен Совет Союзĕпе çыхăнса ĕçлекен обществăн председателĕ выставкăна уçнă чухне çапла калнă: çак выставка Совет Союзĕпе Чехословакия пĕр-пĕринпе туслăн çыхăнса ĕçлессине çирĕплентерсе пынине кăтартать, тенĕ. Макса Совет халăхĕ мĕнле çапăçни çинчен çитес кунсенче докладсем вулама пуçласси çинчен пĕлтернĕ.

Хăнасем выставкăри экспонатсене питĕ интересленсе пăхнă.

США правительствипе Америкăри нефть компанийĕсем нефтепровод тăвасси çинчен килĕшӳ туни

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, правительствăн «Петролеум Резервс» ятлă корпорацийĕн председателĕ Икес çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви Перси заливĕн районĕнчен пуçласа Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнчи çыранне çитиччен нефтепровод тума шутлать. Унăн тăршшĕ 1.200 мильăна яхăн пулмалла. Çав нефтепровода тума 130—160 миллиард доллар укçа кирлĕ пулать. Ăна тусассăн, Пĕрлешӳллĕ Штатсем çарпа флот валли пĕр миллиард баррель нефть запасĕ туса хураççĕ.

РУМЫНСЕМ ССР СОЮЗĔН ОККУПАЦИЛЕНĔ РАЙОНĔСЕНЧЕН ЙЫШЛАН ТАРАÇÇĔ

СТАМБУЛ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, румынсем ССР Союзĕн районĕсенчен йышлăн тараççĕ. Румыни чиновникĕсемпе предпринимательсем çав районсенчен хăвăртрах тармашкăн пур майсемпе те усă кураççĕ. Халь ĕнтĕ влаçсем хăйсем те тарма пулăшаççĕ. Нумаях пулмасть румынсене оккупациленĕ районсенчен Румынине кайма кансĕрлетчĕç, халь ĕнтĕ чугун çулсен дирекцийĕ оккупациленĕ районсенчен таврăнакансене хăйсем çаратнă япаласене тӳлевсĕрех тиесе кайма май панă. «Днестр леш енчи губернатор» Алексиану Одессăран Бухареста тарнă, теççĕ. Çак хыпар ăна пăхăнса тăракан çынсем хушшинче паника пуçласа янă. Румыни вăрă-хурахĕсем оккупациленĕ районсенчен пĕрлĕ оборудованисем тата хаклă япаласем турттарса каяççĕ. Оккупантсем Румынине выльăх-чĕрлĕхе хăваласа каяççĕ тата килти кайăк-кĕшĕке турттараççĕ.

Румыни чугун çулĕсем çав тери хĕсĕнсе çитнĕ. Чугун çул çинче час-часах катастрофăсем пулаççĕ. Влаçсем шухăшланă тăрăх, çав катастрофăсем нумайĕшĕ сăтăрла ĕçсем пирки пулаççĕ. Чугун çул тавраşĕнчи районсенче пурăнакан халăха чугун çул патне çывăха пыма чарнă.

ОККУПАЦИЛЛĔ ВЛАÇСЕН ЭСТОНИ ССР-ĔНЧИ МОБИЛИЗАЦИЙĔ ПУТЛАНСА ЛАРНĂ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Афтонбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, оккупациллĕ влаçсем Эстонире халăха мобилизацилеме хăтланни путланса ларнă. Хаçат çапла çырать: «Çынсене питĕ сахал мобилизациленĕ», мĕншĕн тесен халăхăн пысăк пайĕ çав мобилизацирен пăрăнса юлма тăрăшнă, тет.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем çапла Кассино хулине атакăланă. Анцио районĕнче 5-мĕш арми хăйĕн позицийĕсене çирĕплетнĕ. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче разведка тăвакан чаçсен активлăхĕ палăрнă.

Союзниксен авиацийĕ çаплах тăшман çарĕсемпе вăрçă объекчĕсене тапăннă. Кун каçа тăшманăн 24 самолечĕпе 2 планерне пĕтерсе тăкнă.

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче акăлчансемпе американецсен чаçĕсем малалла куçнă. Кассино хули урамĕсенче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман çаплах 5-мĕш армин Анцио кĕперĕ умĕнчи укрепленисем çинчи позицийĕсем мĕнлине разведка туса пĕлме тăрăшать. Англин 8-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшманăн разведка тăвакан пысăк отрядне йывăр çухатусем кӳнĕ. Пур фронтсенче те патрульсем активлă кĕрешнĕ.

Союзниксен авиацийĕ 1.500 вĕçӳ тунă, тăшманăн чылай объекчĕсене атакăланă.

Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: февралĕн 7-мĕшĕнче Римран кăнтăртарахра сывлăшри çапăçусем пулса иртнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

Берлинпа Брауншвейг хулисене тапăнни

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: февралĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Берлинри тата Хĕвеланăç Германири çар объекчĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра çапла пĕлтернĕ: февралĕн 6-мĕшĕнче кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕ нимĕçсен Францири аэродромĕсене тата Па-де-Кале районĕнчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Американецсен вăтам бомбардировщикĕсем тăшманăн Çурçĕр Францири аэродромĕсене тата ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Тепĕр пĕлтерӳре çапла каланă: февралĕн 7-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Çурçĕр Францири чылай объектсене атакăланă.

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: февралĕн 9-мĕшĕнче ирхине американецсен самолечĕсем, акăлчансен тата ытти союзниксен истребителĕсем хӳтĕленипе, Çурçĕр Францири вăрçă объекчĕсене атакăланă.

Февралĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Германири тата Францири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Американецсен «Вĕçекен крепость» йышши самолечĕсен пысăк соединенийĕсем февралĕн 8-мĕшĕнче ирхине Франкфурт хулине тапăннă чухне тăшманăн 19 самолетне персе ӳкернĕ.

Февралĕн 8-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Çурçĕр Францири объектсене атакăланă.

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕсем тăшманăн самолетсем тăвакан паха центрĕ—Брауншвейгри объекчĕсене тата Германин Гильза—Рийенри (Голландия) аэродромне тапăннă.

Февралĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Паян ирхине Америка авиацийĕ Çурçĕр Франците тапăннă.

ЮГОСЛАВИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килнĕ хыпарсем тăрăх, Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем Вăтам Боснире Крешево тата Фойница хулисене каллех каялла туртса илнĕ. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем Горски Которта ăнăçлăн малалла тапăнса пыраççĕ. Истрире партизансем Фиуме хулипе Триест хули хушшинчи çулпа пыракан нимĕç колоннисене темиçе тĕлте те тапăннă.

Хĕвелтухăç Боснире çапăçусем Горажденпе Рогатица хушшинчи фронт участокĕнче пыраççĕ. Кунта нимĕçсем çĕнĕ вăйсем илсе пыраççĕ. Гацкопа Невесине хушшинчи фронт участокĕнче тата Ликăра çаплах вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Партизансен пĕр отрячĕ тăшман поездне пĕтерсе тăкнă тата пĕр тĕлте Сараевăпа Мостар хушшинчи чугун çула ишсе антарнă.

Ответлă редакторшăн П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00330 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.